Патшалăх пулăшать

# Ачасемшĕн хушма тимлĕх выранлă пулĕ

***Саккунпа килĕшӳллĕн ачаллă çемьесем уйăхсерен ача-пăча пособийĕсем илсе тăма тивĕç. Анчах та Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх, тĕрлĕ сăлтавсене пула Чăваш Енте пуранакан ачаллă çемьесем çурри майлă çак пособие илмеççĕ. Çулталăкан иккĕмĕш çуррине вара 19 пин ачан ашшĕ-амăшĕ çак пособие илме килмен. Министерство палăртнă тăрăх, çӳлерех асăннă сăлтава пула 50 миллион тенкĕ "ытлашши" укçа пухăннă. Çапах та кĕçĕн ăру валли пăхнă укçана вĕсемшĕнех усă курма палăртнă. Çапла вара çие юлнă хĕрарăмсене уйăхсерен 100 тенкĕ, икĕ çултан пуçласа виçĕ çулчченхи ачасене 70 тенкĕ пама пăхнă (çак тапхăрти ачасем вара Чăваш Енте 7 пине яхăн). Эпĕ çак çĕнĕлĕхпе тĕплĕнрех паллаштарма ЧР Сывлăх сыхлавĕн социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пай ертӳçинчен Нина Пантелеевна ПЕТРОВАРАН ыйтрăм.***

– Чылайăшĕ сисет пулĕ, пирĕн Правительство сахал мар хушма çăмăллăха вăя кĕртрĕ. Акă Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2007 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче тухнă 238 № Постановленийĕ те çавăн пиркиех калать. Унпа килĕшӳллĕн çие юлни 12 эрне çитнĕ хĕрарăмсене хĕрарăмсен консультацийĕнчи врач çырса панă справкăпа уйăхсерен 100 тенкĕ укçан компенсаци параççĕ. Çак справкăна пани пирки амбулатори карти çинче палăртаççĕ. Компенсацие çие юлнă хĕрарăмсене витаминсемпе, микроэлементсемпе пуян апат-çимĕçпе апатланма параççĕ.

**– Компенсацие илес пулсан, çемье тупăшĕ пĕчĕк е пысăк пулни витĕм кӳрет-и?**

– Çапла, компенсаци илес тесен çемье тупăшне пăхаççĕ. Унăн калăпăшĕ вара Чăваш Республикинче палăртнă пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен пысăк пулмалла мар. Ăна ЧР Министрсен Кабинечĕн 2004 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнчи 337 № Постановленийĕпе килĕшӳллĕн шутлаççĕ. Паянхи кун тĕлне çак калăпăш 3191 тенкĕпе танлашать.

**– Çемье тупăшне пăхсан компенсаци тивĕçет тейĕпĕр, апла пулсан ача кĕтекен çемьесен мĕнле документсем хатĕрлемелле-ха?**

– Компенсацие тивĕçекенĕн социаллă хӳтлĕх пайне килсе заявлени (регистраци выранĕпе) çырмалла. Унпа пĕрлех врач çырса панă справка, çемьери çынсен шучĕ пирки çырнă справка, çемье членĕсен юлашки 3 уйăхри тупăшĕ çинчен калакан справка, компенсацие ыйтаканăн финанспа кредит учрежденийĕнчи счечĕ çине куçарма ыйтнă заявлени пулмалла.

**– Икĕ çултан пуçласа виçĕ çулчченхи ачасене паракан компенсаци парас йĕрке еплерех пулса пырать тата?**

– Ку категорие уйăхсерен паракан компенсаци калăпăшĕ 70 тенкĕпе танлашать. Ăна илес пулсан участокри врач-педиатр ятарлă справка çырса парать. Çак компенсацие ачасем витаминсемпе, микроэлементсемпе пуян апат-çимĕçпе усă курччăр тесе уйăрнă. Ăна панă чухне çӳлерех асăннă компенсаци пекех çемье тупăшне пăхаççĕ. Компенсацие илес пулсан социаллă хӳтлĕх пайне килсе заявлени (регистраци выранĕпе) çырмалла. Унпа пĕрле çӳлерех асăннă пур документ та кирлĕ тата ача çурални çинчен çирĕплетекен свидетельство копийĕ пулмалла. Заявлени çырнă, пĕтĕм документсене хатĕрлесе панă кунран пуçласа ашшĕ-амăшне (саккунлă представителĕсене) ача виçĕ çул тултарнă уйăхчен компенсаци тӳлеççĕ.

Патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă куракан ачасене тата шкул умĕнхи вĕрентӳ учрежденийĕсене çӳрекенсене компенсаци тӳлемеççĕ.

**– Çӳлерех асăннă документсене сирĕн пата тăратрăмăр, апла пулсан вĕсем компенсацие илсе тăрас тапхăр вĕçлениччченех вăйра шутланаççĕ пулĕ?**

– Çемьери çынсен шучĕ пирки çырнă тата çемье членĕсен тупăшĕ çинчен калакан справкăна ултă уйăх иртсен çĕнĕрен илсе килсе памалла, уйăхăн 15-мĕш числиччен пирĕн пата тăратмалла. Енчен те çак справкăсене килсе памарăр пулсан, сире компенсаци тӳлеме пăраххаççĕ. Ăна илсе тăрассине малалла тăсма вара каллех тивĕçлĕ документсем кирлĕ. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсене тимлĕрех, яваплăрах пулма ыйтас килет.

Çавăн пекех çемье йышĕ улшăнчĕ е ачана патшалăх тулли пулăшу уйăракан вĕрентӳ учрежденине вырнаçтартăр пулсан, ун пирки пирĕн пата пĕр эрне хушшинче пĕлтермелле. Çемье членĕсен тупăшĕ улшăннăран компенсаци илесси çине витĕм кӳме пултарсан, çавăн пирки те виçĕ уйăх хушшинче пире асăрхаттармалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Спорт хыпарĕсем

# Велокросс енĕпе Раççей кубокĕ



2007 çулхи октябрĕн 16-20-мĕшĕсенче велокросс енĕпе Раççей Кубокĕ пулса иртрĕ, вăл виçĕ тапхăрпа пулчĕ. Унта ачасемпе çамрăксен специализациленĕ Олимп резервлĕ Муркашри спорт шкулĕн Оринин уйрăмĕн спортсменĕсем ăнăçлă ăмăртнă. 7 тапхăрта Евгений Казамбаев 6-мĕш выранa тухрĕ. 8 тапхăрта 1996 çулта çуралнă тата унтан кĕçĕнрех хĕр ачасем хушшинчи ăмăртура Таня Кулакова пĕрремĕш пулчĕ. Зоя Вязовапа Света Данилова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырансене пайларĕç. 1994-1996 çулсенчи хĕр ачасен ушкăнĕнче Света Леонтьевапа Алина Блинова тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш, Надя Ступина улттăмĕш вырансене тивĕçрĕç. 1992-1993 çулсенчи хĕр ачасен ăмăртăвĕнче Маргарита Порфирьева пиллĕкмĕш выранa тухрĕ.

8 тапхăрти 1996 çулсенчи тата унран кĕçĕнрех хĕр ачасен ăмăртăвĕнче малти вырансене çӳлерех асăннисемех тивĕçрĕç, анчах та вырансемпе улшăнчĕç. Зоя Вязова пĕрремĕш выранa тухрĕ. Света Даниловапа Таня Кулакова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырансене пайларĕç. 1994-1995 çулсенчи хĕр ачасен ăмăртăвĕнче Света Леонтьева пиллĕкмĕш, Надя Ступина улттăмĕш вырансене тивĕçрĕç.

Ачасене ăмăртăва Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ Иван Васильевич Воробьев хатĕрленĕ.

# Зонăри ăмăрту

Октябрĕн 25-мĕшĕнче ЧР Президенчĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн шкул ачисен X Спартакиади шучĕпе шахмат вăййин зонăри ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта Етĕрне, Çĕмĕрле, Муркаш районĕсенчи шкул ачисем ăмăртрĕç. Муркаш районĕн команди вара çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырансене Етĕрнесемпе Çĕмĕрлесем пайларĕç. Пирĕн район команди ноябрь уйăхĕнче пулса иртекен финала хутшăнĕ.



Редакци почтинчен

# Пире ăнланасса шанатпăр

Эпир, Муркаш пасарĕн предпринимателĕсем, чун ыратнипе район хаçачĕ çине çырса пăхас терĕмĕр.

Çулталăк каялла пирĕн район пуçлăхĕсем Муркашра икĕ пасар туса хучĕç. Пире вара "Сельхозтехникăра" вырнаçнă пасара хăвалама пуçларĕç. Пирĕн выранa вара хуларан килекен сутуçăсене тăратасшăн пулчĕç. Темиçе хут та пуху ирттерчĕç, алă та пустарса çӳрерĕç, милиционерсем те пырса киосксене уçтармасăр тăчĕç, протоколсем те çырчĕç. Хамăр çине тăнипе кăна вырантах юлтăмăр.

"Калач" магазинтан иртме юрамасть тесе унти киоскcене шалалла куçарттарчĕç.

Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин вара виççĕмĕш пасар уçрĕ. "Калач" магазинран малалла. "Южнăй" пасарĕ тейĕн. Аякран килнисем хатĕрĕсене урайне сарса хураççĕ. Вĕсем хушшинчех çĕнĕ таварсем те выртаççĕ. Каллех киосксем лартма пуçларĕç. Кам ăçтан сутма пултарать çапла сутать. Пĕри карта çине çакса тултарнă, тепри хатĕрĕсене çĕр çине купаласа хунă, культурăллă сутаççĕ иккен.

Вĕсем хыççăн мĕн кăна выртса юлмасть пулĕ: кĕленче ванчăкĕ, хут купи, çӳппи-çаппи. Карта урлă парка мĕн кăна пăрахса тултарман пулĕ. Пăхсан кăмăл хуçăлать.

Депутатсем йышăннипе эпир 5 тăваткал метр çĕртен 1260 тенкĕ тӳлетпĕр пулсан, Никитин Н.И. аякран килнĕ сутуçăсенчен 500-шер тенкĕ кăна илет.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пасар ыйтăвĕсемпе ĕçлеме юрать-и вара?

Депутатсем налук укçине те ытти районсенчен пысăклатса тӳлемелле туса панă. Тата кашни кун сутма килекен сутуçăсене мĕншĕн район бюджетне налук укçине тӳлеттермелле тăвас мар?

Ыйтас килет: мĕншĕн пирĕн пуçлăхсем хамăр çынсене хӳтĕлемеççĕ? Эпир суйлавра хамăр сасăсене вĕсемшĕн панă вĕт-ха?

Предпринимательсем те çынсемех вĕт-ха! Пурнăç ырăранах урама шăнма тухса тăман. Эпир, предпринимательсем, çитес вăхăтрах "Калач" магазинран пуçласа йĕрке тăвасса шанатпăр.

Аякран килнĕ сутуçăсене хăйсен пасарне, "Сельхозтехника" пасарне куçарма ыйтатпăр. Çавна çирĕплетсе 60 предприниматель алă пусса паратпăр. Эпир тивĕçлĕ органсен пуçлăхĕсем пире ăнланасса шанатпăр.

**1. Леонидова И.В.**
**2. Шебалова Л.Н.**
**3. Федькина С.П.**
**4. Бочкина С.В.**
**5. Андреева Е.А.**
**6. Романова Н.А.**
**7. Семенова А.Н.**
**8. Николаева Н.В.**
**9. Иванова С.Ю.**
**10. Нестерова А.Г.**
**11. Данилова Н.А.**
**12. Мазикова Г.М.**
**13. Кузнецова А.А.**
**14. Орлова О.М.**
**15. Блинова А.Д...**
**Пĕтĕмпе 60 çын алă пуснă.**


Пĕлтерӳсем. Объявления

**МОРГАУШИ–МОСКВА (ЧЕРКИЗОВО)–МОРГАУШИ**
**На комфортабельных автобусах фирмы «Престиж» 3 раза в неделю (вторник, среда, пятница) рейс из с. Моргауши (отправление в 19 часов 40 минут) в Москву и обратно. Из Москвы отправление в 13 часов 00 минут. Заказ билетов по тел.: 8-906-387-77-08, 2-12-82 (днем), 2-22-40 (вечером).**

**7, 8 ноября с 10 до 19 часов в Моргаушском РДК состоится ярмарка-продажа женских пальто и головных уборов от швейного предприятия «Стиль» г. Перми. Рассрочка 3-10 месяцев (паспорт + ИНН или страховое свидетельство Пенсионного Фонда). Первоначальный взнос 500 рублей.** 1-2.

**Требуется повар. График работы, сутки через трое. Зарплата сдельная. д. Юнгапоси, ул. Ягодная, д. 24. Тел.: 2-14-34, 8-960-308-64-34.** 1-2.

**Продаю автомобиль ВАЗ-21213, 1999 г.в., цвет сине-зеленый, пробег 112000 км., в хорошем состоянии. Тел.: 8-903-322-55-87. Сергей.**

**Продаю автомобиль ВАЗ-21063, 1992 г.в., по договорной цене. Тел.: 8-905-344-51-76.**

**Продаю автомобиль ВАЗ-21043, 2004 г.в., эксплуатируется с 2005 г., пробег 70000 км, цвет коричневый баклажан, цена договорная. Тел.: 8-927-861-70-42.**

**Иккĕмĕш хут март уйăхĕнче пăруламалли шурă-хăмăр тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-960-305-52-19.**

**Продаю участок 28 соток под строительство дома в д. Шептаки по ул. Новая с. Моргауши. Газ, вода, свет. Тел.: 8-903-066-45-51.**

**ТРЕБУЮТСЯ**
**водители на КАМАЗ**
**оплата сдельная**
**т. (8352) 21-35-89**


**Участник долевой собственности Григорьев Юрий Николаевич, 13.03.1959 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Чураккасы, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования сельскохозяйственно-производственного кооператива ЗАО "Колос" (бывшее коллективно-долевое предприятие «Гигант») в поле № 3, полевой севооборот № 1 общей площадью 1,42 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**

**2. Григорьеву Юрию Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Чураккасы.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Григорьев Николай Николаевич, 04.02.1950 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, село Юськасы, ул. Центральная, д. 63, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования сельскохозяйственно-производственного кооператива ЗАО "Колос" (бывшее коллективно-долевое предприятие «Гигант») в поле № 3, полевой севооборот № 1 общей площадью 1,42 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**

**2. Григорьеву Николаю Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, село Юськасы, ул. Центральная, д. 63.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӰ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам. Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3480. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе». Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 30.10.2007 г. Заказ Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А. ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.